Тимофеев А. Нарспи : [сăвă] / А. Тимофеев // Константин Иванова аса илеççĕ / Г. Ф. Юмарт пухса хатĕрленĕ. - Шупашкар, 1990. - С. 245.

Тулли уйăх тӳпене васкарĕ,
Лайăхрах пăхсамăр ун çине.
Вăл тухъяллă, шӳлкемеллĕ мар-и,
Сар хĕрле çыхман-и теветне!

Чечекрен те хӳхĕм пичĕ-куçĕ,
Йăлтăраççĕ çăлтăр-тенкисем.
Акăш евĕр ярăнса пыруçăн
Хумханаççĕ кăпăш кăтрисем.

Вăл Нарспи. Вăл тӳпене иленнĕ
Уйăхпа пĕр сăнлă, пĕртăван.
Çут тĕнчемĕр уçлăхне çĕкленнĕ,
Кантăр вар эсрелĕ çулăхсан.

Çавăнпах, тен, сар хĕр пек илемлĕ
Теççĕ халĕ Çĕрĕн спутникне.
Йăл кулать те тĕттĕм каç хĕвелĕ—
Кашниех курать хăй Нарспине.

Уйăх витĕр уй та курăнатчĕ,
Салтаксем çӳретчĕç вăрçăра.
Юнашар Нарспи те çапăçатчĕ,
Юррисем янратчĕç Чăвашра.

Хĕр паян та ĕлĕкхи пек сывă.
Хĕнлĕхре çĕртмерĕ хăй ятне.
Халăхран ăсмашкăн чĕрлĕх шывĕ
Каçсерен тухать вăл тӳпене,

Шыв ăсать те чиперкке сăваплăн
Шăварать çуралнă çĕршывне.
Юмахри пек туйăнать асамлăн
Колхозри хăмлаçă ывăлне.

Шыв ĕçет те — пи! каять саркайăк,
Матьтине тăвать пралук çине.
Чĕпписем тухсассăн вĕçсе кайĕ
Çур Раççейĕн аслă тӳпине.